**«Ик енче – ик чăнлăх…»**

Ик енче – ик чăнлăх.
Варринче – чĕре.
Тĕттĕме çĕнсе
Çунакан чĕре.

Ик енче – ик çиçĕм.
Варринче – куççуль.
Вилтăпри çине
Ӳкекен куççуль.

Ик енче – ик пурнăç.
Варринче – асап.
Ĕненме, тӳсме
Хистекен асап.

*Туркай, В. «Ик енче – ик чăнлăх» / В. Туркай // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 575.*